Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

77 (7608) № ✻ Шăмат кун, 2008 çулхи октябрĕн (юпа) 11-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Ыран – Ял хуçалăхпе продукци тирпейлекен промышленноçра ĕçлекенсен кунĕ

**ХИСЕПЛĔ ЯЛ ĔÇЧЕНĔСЕМ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АГРОПРОМЫШЛЕННОСТЬ КОМПЛЕКСĔНЧЕ ВĂЙ ХУРАКАНСЕМ!**

Сире хăвăрăн профессиллĕ уявăр ячĕпе – Ял хуçалăхĕнче тата продукци тирпейлекен промышленноçра ĕçлекенсен кунĕпе – чĕререн саламлатăп!

Çĕр-аннемĕр хăйĕнпе ăнăçлă ĕçлесен пире вăй парать, хăйне юратнине ырпиллĕхпе тавăрать. Çакна чăваш хресченĕ пĕлнĕ, пĕлет, манмĕ те. Хресченĕн çăмăл мар ĕçĕ халăхăмăрта уйрăм юратупа пурăнать. Пирĕнтен кашниех авалхи çĕр ĕçченĕн тăрăшулăхне упраса малалла аталантарассипе тимлет, хăйĕн ĕçĕ çĕршыв аталанăвĕшĕн пĕлтерĕшлĕ пулнине шута хурать.

Агропромышленность комплексĕн тăнăç аталанăвĕ – Чăваш Республикин стратегилле задачи. Республикăра яллă вырăнсенче пурăнма тата ĕçлеме меллĕ условисем туса парасси – тăтăшах кун йĕркинче. Производствăна пĕлсе йĕркелени, ресурссемпе эффективлă усă курни, пысăк квалификациллĕ кадрсемпе ĕçлессине кун йĕркинче тăтăш тытни тата вĕсене ял хуçалăхĕнче сыхласа хăварассипе ĕçлени Чăваш Республикин ял хуçалăх потенциалне сыхласа хăварма тата пысăклатма пулăшать. Тĕллевлĕ ĕçленипе паян çĕнĕ йышши выльăх-чĕрлĕх комплексĕсем çĕкленеççĕ, аш-какайпа сĕт производстви ӳсет. Ял çыннисен тăрăшуллă ĕçĕпе кăçал çĕр улмин юлашки çулсенче пулман тухăçне пуçтарса илме май килчĕ.

Паян аграрлă сектор ĕçченĕсем умĕнче татах та çĕнĕ тĕллевсем тăраççĕ: çулсерен миллион тоннăран кая мар çĕр улми, çавăн чухлех тырă-пулă туса илмелле. Çакна валли усăсăр выртакан уçман çеремсене пусă çаврăнăшне кĕртмелле. Çакна чăваш хресченĕ пурнăçласса эпĕ шанатăп!

Сире пурсăра та çĕр ĕçĕнче чуна парса вăй хунăшăн, çĕр-аннемĕре юратнăшăн тав тăватăп! Пурсăра та çирĕп сывлăх, ытлă-çитлĕ те мирлĕ пурнăç, телей, юрату сунатăп!

**Чăваш Республикин Президенчĕ Н. ФЕДОРОВ.**

**ЯЛ ХУÇАЛĂХĔНЧЕ ТАТА АГРОПРОМЫШЛЕННОСТЬ КОМПЛЕКСĔНЧЕ ĔÇЛЕКЕН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНСЕМ!**

Сире професси уявĕпе – Ял хуçалăх тата продукци тирпейлекен промышленноçра ĕçлекенсен кунĕпе чĕререн саламлатăп.

Сире пурсăра та – агропромышленность комплексĕн ертӳçисемпе специалисчĕсене, механизаторсене, выльăх-чĕрлĕх пăхакансене, апат-çимĕç тата продукци тирпейлекен промышленность ĕçченĕсене, хăйсен хастар ĕçĕпе район тата республика ĕçченĕсене çăкăр-тăварпа тата апат-çимĕçпе тивĕçтерекенсене, ĕç ветеранĕсене çирĕп сывлăх тата ăнăçусем сунатăп.

Телейпе юрату, палăртнă тĕллевсене çĕнсе илме малашне сире ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем сунатăп! Сирĕн кил-çуртра яланах ăшă туйăмпа хăтлăх хуçаланччăр!

**Н.М. БУДАРИН, РФ Патшалăх Думин депутачĕ, Раççей Геройĕ, летчик-космонавт.**

**ХИСЕПЛĔ ЯЛ ĔÇЧЕНĔСЕМ!**

Сире пурне те Ял хуçалăхпе продукци тирпейлекен промышленноçра ĕçлекенсен профессии кунĕпе ăшшăн саламлатăп.

Ял хуçалăх ĕçченĕ, тыр-пул çитĕнтерекен - чи пархатарлă профессисенчен пĕри. Çĕр пирĕн пуянлăх, пире тăрантараканĕ пулнине эсир яланах асра тытатăр. Вăл тухăçпа савăнтартăр тесе хăвăртан килнине йăлтах тăватăр. Çанталăк условийĕсене пăхмасăр, акса-лартса хăварнă ял хуçалăх культурисене вăхăтра тата тăкаксăр пухса кĕртес тесе ырми-канми тимлетĕр. Тăрăшни сая каймарĕ. Кăçал пĕлтĕрхинчен палăрмаллах нумайрах тыр-пул çитĕнтерсе илтĕмĕр. Çĕр улми тухăçĕ те иртнĕ çулхинчен пысăкрах пултăр тесе хăвăртан килнине йăлтах турăр. Выльăх апатне те çителĕклĕ янтăларăр. Халĕ вара пахча çимĕçпе тымар çимĕçе уйран йĕркеллĕ пуçтарса кĕртес тесе тимлетĕр.

Выльăх - чĕрлĕх отраслĕнче вăй хуракансем те район аталанăвĕшĕн чунтанах тăрăшаççĕ. Аш, сĕт ытларах туса илессишĕн тимлеççĕ. Пирĕн паянхи тĕллев – малалла хальхинчен тата та ӳсĕмлĕрех вăй хурасси. Ку вара йăлтах сирĕн тăрăшулăхăртан килет.

Уйрăм тав сăмахне шкулсенче вĕренекенсен ячĕпе те каласа хăварас килет. Çуллахи вăхăтра вĕсем ял хуçалăх культурисене çум курăкран тасатма пулăшаççĕ, вырмара йĕтемсем çинче вăй хураççĕ. Кĕркунне шкул ачисем ял хуçалăх предприятийĕсенче аслисемпе тан çĕр улми пухса кĕртнĕ çĕрте тăрăшаççĕ. Ашшĕ-амăшĕсем хăйсен ывăлхĕрĕсене мĕн пĕчĕкрен ĕçе хăнăхтарса ӳстерни кăмăла çĕклет.

Кăçалхи çур çул пĕтĕмлетĕвĕсемпе республикăри социаллă-экономика ăмăртăвĕнче пирĕн район 3 вырăн йышăнма пултарчĕ. Çакă вăл, хаклă ентешĕмĕрсем, республикăра сирĕн ĕçе тивĕçлипе хаклани пулать. Тавах сире чунчĕререн пурнăçлакан пархатарлă ĕçĕршĕн, чăтăмлăхăршăн, тăрăшулăхăршăн.

Умра – Пукрав, сивĕ хĕл кунĕсем. Çакă пирĕн яваплăха татах та ӳстерме ыйтать. Продукци туса илессипе, выльăх – чĕрлĕхе ăнăçлă хĕл каçарассипе тимлемелле. Çитес çул валли пахалăхлă вăрлăх хатĕрлесе хăвармалла. Ку тĕлĕшпе эсир малашне те хăвăртан килнине йăлтах пурнăçласса, йывăрлăхсене çĕнтерсе, ӳсĕмсем тăвасса шанатăп.

Пурне те сире çирĕп сывлăх сунатăп. Ĕмĕрĕр вăрăм та телейлĕ пултăр. Çемйĕрсенчи килĕшӳпе тату пурнăç пĕрмаях хавхалантарса, вăй парса тăтăр, сĕтел çи яланах тулăх пултăр.

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**




## Ырă ĕçпе палăрчĕç

***Черетлĕ вырма ĕçĕсем историе кĕрсе юлчĕç. Районти çĕр ĕçченĕсем кăçал хăйсен тăрăшулăхĕпе тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсене иртнĕ çулхисенчен самай ытларах пуçтарса кĕртрĕç. Çакăнта «хир карапĕсен» экипажĕсен тӳпи те пĕчĕк мар. «Герой» пĕрлешӳллĕ хуçалăхри Валерий Васильевич Ердуков (сăн ӳкерчĕкре сылтăмра) кăçал 21-мĕш вырмана «хир карапĕн» штурвалĕ умĕнче ирттерчĕ. Çак ĕçре ăна кăçал Алексей Макаров çамрăк пулăшрĕ. Тăрăшуллă экипаж кăçал хăйсене çирĕплетсе панă «ДОН-1500» комбайнпа 1200 тоннăна яхăн çĕнĕ тырă çапса тĕшĕлерĕ, çакнашкал «хир карапĕсен» класĕнче тава тивĕçлĕ ĕçпе районта та малтисен ретне кĕчĕ. Паян вара Валерий Ердуков вĕренме кайнă Алексейăн ашшĕпе Михаил Валериановичпа ДОН-1500 комбайна ГОСТпа килĕшӳллĕн хĕллехи управа лартрĕ.***

***А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.***

## Интервью

# Çитĕнӳсем пур, татах та тăрăшмалла

***Вăхăт хăвăрт иртет. Ял ĕçченĕсемшĕн вăл пушшех те сисĕнмест. Тин çеç çур акине ирттернĕ пекчĕ. Халь ĕнтĕ уйсем те пушанса юлчĕç. Ял хуçалăхпе продукци тирпейлекен промышленноçра ĕçлекенсен кунĕ те çитсе тăчĕ. Пирĕн районшăн та пысăк пĕлтерĕшлĕ вăл. Мĕншĕн тесен ял хуçалăхĕ пирĕн район экономикин тĕп никĕсĕ пулса тăрать. Агропромышленность комплексĕнче çĕршер маттур ĕçчен вăй хунипе ĕнтĕ район аталану çулĕпе малаллах каять.***

***Мĕнлерех ӳсĕмпе, мĕнлерех кăмăлпа кĕтсе илеççĕ çак ĕçре вăй хуракансем хăйсен професси уявне? Çакăн çинчен каласа пама ыйтрăм та ĕнтĕ эпĕ район пуçлăхĕнчен Ю.А. ИВАНОВРАН.***

**– Юрий Александрович, чи малтанах çĕр ĕçченĕсен кăçалхи ӳсĕмĕсемпе паллаштарсан аванччĕ.**

–Хăйсен професси уявне ял ĕçченĕсем япăх мар кăтартусемпе кĕтсе илеççĕ. Тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсене 14310 (килти хушма хуçалăхсемпе 15 пин гектар пулать) гектар çинчен 29600 тонна пуçтарса кĕртрĕмĕр. Иртнĕ çулхинчен 10 пин тонна нумайрах пулать ку. Районĕпе вăтам тухăç бункер виçипе 22,3 (иртнĕ çул – 18 центнер) центнерпа танлашрĕ. Ильич яч. хис. (30,6 центнер), Чкалов яч. хис. (30,5 центнер), «Ударник» (29,8 центнер), Суворов яч. хис. (28,8 центнер), «Свобода» (26,8 центнер), «Герой» (26 центнер) хуçалăхсен тухăçĕ районти вăтам кăтартуран палăрмаллах пысăк пулчĕ.

Паллах, тыр-пула вăхăтра тата пысăк пахалăхпа пухса кĕртесси комбайнерсен ăсталăхĕпе çаврăнăçулăхĕнчен нумай килет. Кăçалхи вырмара «Акрос- 530» комбайнпа ĕçлекенсенчен чи нумай тырă çапса тĕшĕлекенни Суворов яч. хис. хуçалăхри Р.В. Кузнецов (1622 тонна) пулчĕ, «Дон -1500» комбайнпа – «Свобода» хуçалăхри В.А. Соловьев (1500 тонна), «Вектор» комбайнпа – Чкалов яч. хис. хуçалăхри Б.Н. Никитин (1345 тонна), «Енисей» комбайнпа – Ильич яч. хис. хуçалăхри Ю.П. Егоров (864 тонна), «Полесье» комбайнпа – «Ударник» хуçалăхри И.Н. Васильев (755 тонна), «Нива» комбайнпа – «Геройри» Ю.Н. Евдокимов (500 тонна ытла).

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

## Йыхрав

# Черетлĕ 28-мĕш лару

Депутатсен районти Пухăвĕн председателĕн йышăнăвĕпе депутатсен районти Пухăвĕн черетлĕ 28-мĕш ларăвне 2008 çулхи октябрĕн 17-мĕшĕнче пухма йышăннă. Кун йĕркине пăхса тухма çак ыйтусене кĕртнĕ:

1. Муркаш районĕн бюджетне 2007 çулта мĕнле пурнăçлани çинчен.
2. Депутатсен Муркаш район Пухăвĕн 2007 çулхи ноябрĕн 30-мĕшĕнчи С-22/3 № «Муркаш районĕн 2008 çулхи бюджечĕ çинчен» йышăнăвне улшăнусемпе хушусем кĕртесси çинчен.
3. Депутатсен Муркаш район Пухăвĕн 2007 çулхи октябрĕн 25-мĕшĕнчи С-21/6 № «Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин законодательствисемпе килĕшӳллĕн налуксемпе тӳлевсем пухассине вырăнти самоуправлени органĕсем çине хунă май Муркаш районĕнче налук йĕркелĕвĕн ыйтăвĕсене тивĕçтерессин положенине çирĕплетесси çинчен» йышăнăвне улшăнусемпе хушусем кĕртесси çинчен.
4. Муркаш район администрацийĕнче муниципаллă службăн вакантлă должноçĕн ертӳçин тивĕçне пурнăçлама конкурс ирттерессин положенине çирĕплетесси çинчен.
5. Муркаш районĕн харпăрлăхĕнче шутланакан шыв объекчĕсемпе усă курнăшăн укçа тӳлессин, унăн виçисен йĕркине çирĕплетессин йĕрки çинчен.
6. Муркаш районĕн территорийĕнче вырнаçнă тата харпăр хăй тĕллевĕпе пурте усă куракан шыв объекчĕсемпе усă курмалли правилăсене çирĕплетесси çинчен.
7. Муркаш районĕн территорийĕнчи вырăнти пĕлтерĕшлĕ уйрăмах упракан çĕрсен шутне палăртмалли йĕрке пирки калакан положение çирĕплетесси çинчен.

Депутатсен районти Пухăвĕн ларăвне ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене, район администрацийĕн управленийĕсемпе пайĕсен пуçлăхĕсене, çамрăксен депутатсен районти Пухăвĕ çумĕнчи парламенчĕн представителĕсене чĕнеççĕ.

## Уй-хир ĕçĕсене вĕçленĕ май

# Тыр-пул уявĕ – октябрĕн 25-мĕшĕнче

Район администрацийĕн пуçлăхĕн 2008 çулхи октябрĕн 8-мĕшĕнчи 569 № йышăнăвĕпе Ял хуçалăх тата продукци тирпейлекен промышленноçра ĕçлекенсен кунне халалласа ирттерекен Тыр-пул уявне октябрĕн 25-мĕшне палăртнă. Ăна хатĕрленсе ирттерме комисси йĕркеленĕ. Ăна район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов ертсе пырать.

Тыр-пул уявне ирттерессипе ответлисен пурнăçламалли ĕçĕсене палăртнă. **Хамăр инф**.

## Пĕрлехи информаци кунĕ

# Информкун теми – бюджет ыйтăвĕсем

Районта октябрĕн 15-мĕшĕнче черетлĕ информаци кунне ирттерме палăртнă. Унăн теми – 2009 çулхи тата планланă 2010, 2011 çулсенчи республика бюджечĕ: экономика аталанăвĕн, пурнăç пахалăх шайĕн тата социаллă аталанăвăн бюджечĕ, 2008–2009 çулсенчи хутса ăшăтмалли тапхăра мĕнле ирттересси, муниципаллă пĕрлешӳсенче пурнăçпа тивĕçтерессин системисен ĕçне йĕркелесси çинчен.

Тăвата ушкăн йĕркелеме пăхнă. Вĕсем Муркашпа Чуманкасси шкулĕсенче, «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕпе Çатракасси ял тăрăхĕнче, Ильинка ял тăрăхĕнче, Москакасси шкулĕпе Ярапайкасси ял тăрăхĕнче, «Герой», «Лидер» хуçалăхсенче пулса курĕç. **Хамăр инф.**

## Юбилей

# Саламлатпăр



Паян Кăпас ялĕнчи Соколовсен çемйинче пысăк уяв: кил хуçи, **Николай Леонтьевич СОКОЛОВ,** 80 çул тултарать! Юратнă мăшăрĕ, Калиста Порфирьевна, икĕ ывăлĕпе пĕр хĕрĕ, кинĕсем, кĕрӳшĕсем, пилĕк мăнукĕпе виçĕ прамăнукĕ тата тăванĕсемпе ял-йыш – пурте юбиляра чĕререн саламласа, ырă парнесем парса, юрăсем шăрантарса, çирĕп сывлăхпа савăнăçлă кунсем сунса чаплă уяв ирттереççĕ.

Кил хуçипе арăмĕ пĕрне-пĕри ятпа «Колька» тата «Калĕ» тесе чĕнсе 54 çул пурнăç сукмакĕпе пĕрле утаççĕ. Уйра е анкартинче ĕçлемелле-и, выльăх пăхмалла-и, туя каймалла-и, салтак ачи ăсатмалла-и – яланах вĕсем пĕрле. Николай Леонтьевич аллинче кирек мĕнле ĕç те тĕплĕн пулса пырать. Пурнăç йывăрлăхĕсем витĕр тухнăскер, çапах та ырă кăмăллă та сăпайлăскер, мĕнлерех хитре те ăшшăн каласа парать вăл «Нарспи» поэмăн сыпăкне, «Çӳллĕ валак пуçĕнче шăнкăртатса шыв юхать...» Астăвать-ши пур çын та çав юратуллă йĕркесене вĕçне çитиех? Николай Леонтьевич вара астăвать! «Чăн-чăн артист ку», - тейĕн вăл сăвă вуланă чухне. Унăн чи юратнă кĕнеке – «Нарспи» поэма, чи юратнă вăхăт - çулла, чи юратнă прамăнук - Константин (1 çул та 2 уйăх), чи юратнă хаçат – «Çĕнтерӳ ялавĕ», вăл ăна уява кĕтнĕ пекех кĕтет. Саламлатпăр, саламлатпăр, саламлатпăр. Николай Леонтьевич! 80 хут мачча патне çитиех пуканпа çĕклетпĕр. Сана юрататпăр, сывлăх сунатпăр.

**Салампа кил-йыш, тăвансем, ял-йыш.**

Поздравляем свою любимую маму, жену, бабушку – **ВАСИЛЬЕВУ Алину Варламовну** – с юбилеем.

Желаем Вам крепкого здоровья,
Побольше светлых и счастливых дней.
Пусть будет жизнь наполнена любовью,
Заботой близких и теплом друзей.

**С поздравлением муж, дети, внуки, родственники.**



Юратнă аннене, асаннене – Çатракасси ял тăрăхне кĕрекен Çатракасси ялĕнче пурăнакан **Вера Павловна ШАРОВАНА** сумлă юбилей - 55 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Юбилей ячĕпе саламласа сана мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Вăрăм кун-çул, тулли телей, çирĕп сывлăх пулччăр. Çирĕп сывлăхпа татах нумай çул ачусемпе, мăнукусемпе савăнса пурăнмалла пултăр.

Хаклăран та хаклă аннемĕр! Эс пурришĕн савăнатпăр. Хамăра çав тери телейлĕ туятпăр. Тайма пуç сана пуриншĕн те.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕсемпе кинĕсем, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем, хăти-тăхлачисем.**



Юратнă мăшăра, аттене, кукаçа, пиччене, ывăла, кĕрĕве – Кашмаш ялĕнче пурăнакан **Герман Васильевич МАЙОРОВА** 60 çул тултарнă ятпа саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, сурпан пек вăрăм кун-çул, иксĕлми телей сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, 3 хĕрĕ, 3 кĕрĕвĕ, 5 мăнукĕ, амăшĕ, йăмăкĕсем мăшăрĕсемпе, хунями.**